25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
МАЙ
28
КĔÇНЕРНИКУН
122(6057) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çум çумлас ĕçе тата ретсем хушшинче ĕçлессине вăхăтра пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тумалли мерăсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ 1942 çулти майăн 26-мĕшĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен политотделĕсене, совхозсен директорĕсемпе колхозсен правленийĕсене çакăн çине çавăрăнса пăхма хушаççĕ: кăçалхи çул пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре, çапла вара çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли ялхуçалăх продукчĕсем çителĕклĕ хатĕрлес ĕçре çум çумлани тата ретсем хушшинче ĕçлени уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Çуркунне сухаланă çĕр лаптăкĕ нумай пулнă пирки тата çĕр нӳрĕ пулнă пирки кăçал тырпул акнă вырăнсенче çумкурăкĕсем нумай пулас хăрушлăх пур. Тырпул акнă çĕр лаптăкĕсене çумкурăкĕсенчен вăхăтра тасатни тырпула комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе хăвăрт, пĕр çухатусăр пухса кĕртме май парать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртаççĕ: партипе совет организацийĕсем нумайĕшĕ тырпул акнă çĕр лаптăкĕсене çумлас тата пропашной культурăсем акнă çĕрте ретсем хушшинче ĕçлес ĕçе иртнĕ çулта тивĕçлипе хакламан, çавна пула çумкурăкĕсем пусса илсе тырпул тухăçлăхне чакарнă, тырпулсене комбайнсемпе пухса кĕртес ĕçре йывăрлăхсем пулнă. Опыт кăтартса панă тăрăх, тырпул акнă çĕр лаптăкĕсене çумлани, чăннипе илсен, кашни гектартан сахалтан та 2—3 центнер ытларах тĕштырă туса илме май парать, çакă вара кашни районра çĕршер пин пăт ытларах, пĕтĕм республикăра вара темиçе миллион пăт ытларах тырпул туса илме пулăшать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Райсоветсен исполкомĕсемпе парти райкомĕсене колхозсемпе совхозсенчи тырпул акнă пĕтĕм çĕр лаптăкĕсене çумлас ĕçе вăхăтра пурнăçа кĕртме хушас.

Колхозсемпе совхозсенче пропашной культурăсемпе технически культурăсем акнă çĕр лаптăкĕсенче ретсем хушшинче виçĕ хутран кая мар ĕçлемелле, кашни хутĕнчех ретсене алăпа çумласа тасатмалла. Ретсĕр акнă технически культурăсен çĕр лаптăкĕсене çывăх сроксенчех алăпа çумламалла. Колхозсенче çум çумлама ĕçе юрăхлă колхозниксене, колхозницăсене тата çамрăксене пурне те кăлармалла, совхозсенче вара рабочисемпе служащисене тата вĕсен çемьисен членĕсене пурне те çум çумлама кăлармалла.

2. Райсоветсемпе горсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсене тата Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи мобилизаци отделне çапла тума хушас: хуласенчи, рабочи поселоксемпе район центрĕсенчи промышленность предприятийĕсемпе транспортра ĕçлемен граждăнсене, государство учрежденийĕсенчи, коопераципе обществăллă учрежденисенчи служащисен пĕр пайне, ВУЗ-сенче, техникумсемпе шкулсенче вĕренекенсене, çавăн пекех тата колхозсенче пурăнакан, колхозра тăман, ĕçлеме пултаракан çынсене, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1942 çулти апрелĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, колхозсемпе совхозсене çум çумлас тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçре пулăшма мобилизацилеме хушас.

. Çакăн пек йĕрке тăвас: ялхуçалăхĕнче ĕçлеме мобилизациленĕ çынсене пĕр-пĕр колхоза е совхоза çав колхоз е совхоз панă заявка тăрăх бригадăсем туса ямалла. Бригадăна ертсе пыма мобилизациленĕ çынсем хушшинчен бригадир уйăрса лартмалла, бригадирсем мобилизациленĕ çынсем колхоза кайма пухăннишĕн тата вĕсене колхозри е совхозри ĕçре усă курассишĕн ответ тытаççĕ.

3. Вĕтам тата туллимар вĕтам шкулсенче вĕренекенсене колхозсемпе совхозсене çум çумлама тата ытти ĕçсене тума янă чухне райисполкомсемпе парти райкомĕсен çакна шута илсе ĕçлемелле:

а) вĕренекенсене отрядсем туса арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăмшарăн ямалла, вĕсене шкулти учительсем ертсе пымалла.

б) Шкул ачисен отрячĕсен ĕçĕ колхозсемпе совхозсенче организованно пулса пымалла, ĕçе тухас енĕпе отрядра шкулти пек дисциплина пулмалла, вĕренекенсем учителе — отряд руководительне пĕтĕмĕшпех пăхăнса ĕçлемелле.

в) Шкул ачисен отрячĕсем валли колхозсемпе совхозсен çум çумлама уйрăм участоксем уйăрса памалла, çав участоксенче ĕçлессине учитель организацилет тата вăл ĕçсене пурнăçа кĕртессишĕн ответ тытать.

г) Шкул ачисен отрячĕсене ертсе пынăшăн учительсене, вĕсем ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсемсĕр пуçне, шкул ачисен отрячĕ кашни кунхи нормăна тултарса пынă пулсан, кашни кунах 1,5 ĕçкунĕ хушса памалла.

4. Тырпул акнă çĕр лаптăкĕсене вăхăтра çумлама кирлине тата тырпулсене вăхăтра пухса кĕртме кирлине шута илсе, çавăн пекех тата çав ĕçсенчи нормăсене юлашки 5—6 çул хушшинче пăхса тухманнине шута илсе, колхозсене çум çумлас тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçри хальхи нормăсене ӳстерме сĕнес: лашапа тумалли ĕçсенче 10 процент тата алăпа ĕçлемелли ĕçсенче 15 процент чухлĕ ӳстерме сĕнес. Райисполкомсемпе парти райкомĕсене 1942 çулти июнĕн 5-мĕшчен çĕнĕ нормăсем тăвас ĕçре колхозсене пулăшма хушас.

5. Çакăн пек йĕрке тăвас: çум çумлас тата колхозсемпе совхозсенче тырпула пухса кĕртес ĕçсем шурăмпуçĕнчен пуçласа шурăмпуçченех пулса пымалла, ирхи тата кăнтăрлахи апатсем çиме пĕчĕк перерывсем кăна тумалла. Ирхи тата кăнтăрлахи апат çиме, сывăрма тата ачасене пăхма яла çӳрени колхозниксен нумай вăхăтне сая янине шута илсе, колхоз председателĕсемпе уйхир бригадисен бригадирĕсене ĕçри колхозниксем пĕрлешсе апатланассине тата хиртех çывăрассине организацилеме, ачасем валли колхозсенче яслисем, садсем, площадкăсем организацилеме хушас.

6. Колхозниксем, шкул ачисен отрячĕсем тата ялхуçалăхĕнче ĕçлеме мобилизациленĕ çынсем çумласа хатĕрленĕ çĕр лаптăкĕсене обязательнăй йĕркепе бригадирсемпе звеньевойсем йышăнмалла тăвас, йышăннă чухне ĕçĕн пахалăхне кăтартмалла, ĕçе пахалăхсăр тунă пулсан, ăна бракламалла та тепĕр хут тутармалла, тепĕр хут ĕçленĕшĕн ĕçкунĕсем памалла мар.

7. Çум çумлас тата ретсем хушшинче ĕçлес ĕçсене организацилеме çĕрĕç пайĕсемпе МТС-сен кашни агрономĕ çумне 7—9-шар колхоз çирĕплетсе памалла, колхоз председателĕсемпе пĕрле вĕсем çине çав ĕçсемшĕн ответлăх хумалла.

8. Парти райкомĕсен секретарĕсене тата членĕсене, райсовет исполкомĕсен членĕсене колхозсемпе совхозсен пĕрпĕр ушкăнĕн тырпулĕ мĕнле тăнине тата çум çумлас ĕç мĕнле пынине сăнаса тăма, çумкурăкĕсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе вырăнта тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушас.

9. Наркомзема, райисполкомсене, парти райкомĕсене тата колхозсен правленийĕсене çапла тума хушас: çум çумлас тата ретсем хушшинче ĕçлес ĕçсемпе пĕрлех, ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурт-кăпшанкăсене хирĕç, шăшисемпе йĕкехӳресене, улăх лĕпĕшне, ыраш калчин вредителĕсене хирĕç, долгоносика, саранчасене тата ытти хурт-кăпшанкăсене хирĕç кĕрешессине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмалла. Тырпул акса хăварнă çĕр лаптăкĕсенче ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурт-кăпшанкăсем пуррине палăртас тĕлĕшпе малтанлăха тĕрĕслесе иртермелле тата, колхозсемпе совхозсен хирĕсенче вредительсем курăнсан, вĕсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла.

10. Июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çум çумлас тата тырпул акнă çĕр лаптăкĕсенче ĕçлес ĕç мĕнле пыни çинчен колхозсемпе совхозсем кашни 5 кунра отчетсем тăратмалла тăвас.

11. Райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене икĕ кунлă срокра çак постановление хăйсен заседанийĕсенче сӳтсе-явма тата çум çумлас ĕçпе ретсем хушшинче ĕçлессине вăхăтра туса ирттерес тĕлĕшпе тумалли мероприятисене палăртса хума хушас.

Çак постановление колхозниксен, МТС-семпе совхозсен работникĕсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче сӳтсе-явмалла, вăл пухусенче çум çумлас ĕçе организацилес енĕпе тивĕçлĕ решенисем йышăнмалла.

12. Райсоветсемпе горсоветсен исполкомĕсене тата ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсене колхозсемпе совхозсенче çум çумлас ĕç мĕнле пыни çинчен, хуласенчи, рабочи поселоксенчи тата район центрĕсенчи ĕçлеме пултаракан çынсене, ВУЗ-сенче, техникумсемпе шкулсенче вĕренекенсене, çавăн пекех тата колхозсенче пурăнакан, колхозра тăман çынсене мобилизаци йĕркипе çум çумлас тата тырпулсене пуçтарса кĕрес ĕçсенче ĕçлеме яни çинчен июнĕн 10-мĕш тĕлне Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомне пĕлтерме хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 26-мĕшĕнче **Харьков** енче пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă рубежсене çирĕплетсе пынă.

Изюм—Барвенково енче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотин хаяр атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулса иртмен.

Майăн 25-мĕшĕнче нимĕçсен 11 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 25-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 25 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 20 лавне, 12 полевой тата зенитнăй орудине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи эшелона çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине 7 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ эрнере, майăн 17-мĕшĕнчен пуçласа 23-мĕшне çитиччен, нимĕçсенне 332 самолет пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн 127 самолет пĕтнĕ.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть нимĕçсен пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă. Вилнисене кăна шутласан та, противник 250 çынран ытла çухатнă. Ганиев юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри подразделенин артиллерисчĕсем противникăн пехотине 2 ротăна çити, минометсен 2 батарейине тата çар грузĕсем турттарса пыракан 2 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕçсен контратакине сирсе пăрахнă та, ăна хăваласа кайса, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. Гитлеровецсен 350 салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă. Нимĕçсен 4 танкне çунтарса янă, 6 оруди, 11 пулемет, 7 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн боецсем вăйлă çирĕплетнĕ пункта атакăланă. Урамра пулса иртнĕ кĕске çапăçу хыççăн противникăн каялла чакма лекнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли тата нумай хĕçпăшалĕ выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн танкистсем, Охрименко юлташ ертсе пынипе, противникăн танксене хирĕç пемелли 4 орудине тата темиçе дзотне пĕтерсе тăкнă. Пĕр дзот ишĕлчĕкĕ айĕнчех нимĕç салтакĕсен 30 виллине тупнă.

* * *

Противникăн тылĕнче партизансен отрячĕсемпе пĕрлешсе кĕрешекен пирĕн чаçсемпе нимĕçсен чылай пысăк вăйĕсем хушшинче пулса иртнĕ çапăçусем çинчен хыпар илнĕ. Нимĕç пехотин пĕр полкĕ, танксем пулăшнипе, пирĕн пĕр чаçăн позицийĕсем çине наступлени пуçласа янă. Каçпала нимĕç оккупанчĕсем, пирĕн войскăсене хĕссе, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ пулнă. Анчах та пирĕн боецсем, контратака туса, нимĕçсене çав ялтан чаcах каялла çапса кăларнă. Çакăн хыççăн противник темиçе хутчен те хаяр атакăсем тунă, анчах çав атакăсене пирĕн боецсем пурне те сирсе янă. Малтанлăха палăртнă даннăйсем тăрăх, пирĕн боецсем партизансемпе пĕрле икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 8 танкне, 2 бронемашинине, 15 автомашинине тата 3.000 салтакĕпе офицерĕнчен кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Наводчик Овчаренко юлташ нимĕçсен танкĕсене çывăхах янă та тупăран пĕрре персех малта пыракан машинăна стройран кăларнă. Темиçе минута хушши тĕл персе тăрса нимĕçсен иккĕмĕш танкне çĕмĕрнĕ. Противникăн ытти танкĕсем вара васкаса каялла çавăрăнса кайнă.

* * *

Старши лейтенант Дробин ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ, хăйне панă задание пурнăçа кĕртсе пырса, противникăн хăйĕнчен йышлăрах вăйĕсене хирĕç çапăçу пуçласа янă. Кĕске, анчах та хаяр тытăçура пирĕн боецсем белофинсен салтакĕсемпе офицерĕсене 10 çынна çити пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 207-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Фридрих М. çапла каласа панă: «Эпĕ фронтра мĕн пурĕ те 5 кун кăна пултăм, 6-мĕш кунĕнче вара хам ирĕкпе тыткăна парăнтăм. Çав кĕске вăхăт хушшинчех эпĕ çакна пĕлсе çитрĕм: нимĕç салтакĕсем нумайĕшĕ фронтран тыла çăлăнса тухас тесе тем тĕрлĕ майсемпе те усă кураççĕ. Варвитти чирĕ лектерсе госпитале каймалла пултăр тесе вĕсем вĕретмен сивĕ шыв тем чухлех ĕçсе тултараççĕ. Ротăра чирлĕ салтаксем нумай. Темиçе салтак шатраллă тифпа чирлесе ӳкнĕ. Полкра медицина персоналĕ пит те сахал, пирĕн ротăра вара фельдшер та çукчĕ. Фронта çитнĕ малтанхи кунах пире приказ вуласа пачĕç. Çав приказра 12-мĕш ротăран дезертира тарнă салтака персе пăрахмалла тунă тесе каланă».

* * *

Германире çак вăрçăпа тата гитлерла режимпа килĕшмен çынсене массăллăн арестлеççĕ тата пере-пере пăрахаççĕ. Эссенра майăн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле судсăр-мĕнсĕрех 100 çынна ытла персе пăрахнă. Хаммра гестапо 40 çынна арестленĕ. Вĕсенчен те нумайĕшне персе пăрахнă. Çынсене çапла пере-пере вĕлереççĕ пулсан та, Германи çĕршывĕнче вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем вăйлăлансах пыраççĕ. Майăн 21-мĕшĕнче фашистсен «Националь цейтунг» ятлă хаçачĕн ирĕксĕрех çакна йышăнмалла пулнă: «Пирĕн халăх хушшинче çакăн пек сасăсем илтĕнеççĕ. Çав сăмахсем халăх хушшинче иккĕленекенсем пуррине кăтартса параççĕ. Ун пек çынсем пирĕн çар кăçал та пĕлтĕрхи пекех вăйлăн пыра-пыра çапма пултарассине ĕненмеççĕ. Вĕсем пирĕн çарăн çĕнтерӳллĕ шухăш-кăмăлĕсем пусăрăнса ларнă ĕнтĕ, тесе шутлаççĕ...» Фашистсен листовкинче çавăн пек йĕркесем пичетленсе тухни — Германи тылĕ пур çĕвĕсем тăрăх та шатăртатса çурăлма пуçланине куракан гитлерла шайка çавтери хăраса тăнине кăтартать.

Майăн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле **Харьков** енче пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă рубежсене çирĕплетсе пынă.

Изюм—Барвенково енче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç вăйлăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Носков юлташ командир пулса ертсе пыракан кавалери чаçĕ (Кăнтăр фрончĕ) тăшманăн тылĕсенче 60 километр тăршшĕ рейд тунă. Пирĕн кавалеристсем противника хирĕç хаяррăн çапăçса нимĕçсен 2.100 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть ятсăр высоташăн икĕ кун хушши çапăçса нимĕçсен «СС» дивизийĕнчи 300 салтакпа офицера пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи уйрăм участоксенче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 250 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 14 пулемета пĕтерсе тăкнă, 2 дзот тата темиçе блиндаж çĕмĕрнĕ.

* * *

Н. районĕнчи пирĕн позицисем çине нимĕçсен самолечĕсем вĕçсе пырса тапăнма хăтланнă. Бузынин юлташăн чаçĕнчи гвардеец-зенитчиксем темиçе хут пĕр харăс персе нимĕçсен 3 бомбардировщикне ӳкернĕ.

* * *

Николай Ш. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ (Ленинград фрончĕ) çĕрле нимĕçсен 400 салтакпа офицертан тăракан гарнизонĕ çине кĕтмен çĕртен тапăннă. Партизансем часовойсене шăппăн вĕлерсе пĕтернĕ те гитлеровецсем çывăрнă çуртсене гранатăсем вăркăнтарнă. Çуртсенчен чупса тухакан фашистла оккупантсем çине автоматсенчен персе тăнă. Çак операци вăхăтĕнче партизансем 200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 29-мĕш мотодивизийĕнчи 15-мĕш мотострелковăй полкран тыткăна лекнĕ салтак Бруно М. çапла каласа панă: «1941 çулти декабрьте мана маршевăй батальона кĕртсе Хĕвелтухăçĕнчи фронта ячĕç. Эпир Польша урлă килтĕмĕр. Вокзалсенче çĕтĕк-çатăк тăхăннă, ывăнса çитнĕ хĕрарăмсемпе ачасем çӳретчĕç. Вĕсем сивĕ пирки чĕтретчĕç, çăкăр пама йăлăнса ыйтатчĕç. Салтаксем вĕсене тапа-тапа вагонсем патĕнчен хăваласа яратчĕç. Январь уйăхĕнче эпĕ Мценска лекрĕм. Февралĕн 3-мĕшĕнче çĕрле çар влаçĕсем хулара юлнă çынсене, вăл шутрах хĕрарăмсемпе ачасене те, урама хăваласа кăларчĕç те конвой сыхласа пынипе тыла ăсатрĕç. Утса пыма пултарайман çынсене çавăнтах персе пăрахрĕç.

Пирĕн полк юлашки вăхăтра пысăк çухатусем тӳсет. Нумайĕшĕн шухăш-кăмăлĕ начар. Дезертирсем нумайланма пуçларĕç. Эпĕ нимĕçсен икĕ салтакне çартан тарнăшăн персе пăрахнă çĕрте пултăм. Икĕ салтак тата икĕ унтер-офицер приказа пурнăçлама килĕшмен. Вĕсене çав кунах тăрта илсе кайрĕç, вара эпир вĕсене урăх кураймарăмăр».

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Харьков облаçĕнчи Старица ялне аркатса хăварнă. Унта пурăнакан старикесене, хĕрарăмсемпе ачасене нумайĕшне асаплантарса вĕлернĕ. Гитлерла палачсем Мазина колхозницăна, Балакиревăна ывăлĕпе пĕрле, Дильнин, Саратов тата ытти колхозниксене çакса вĕлернĕ. Вĕсем ялти çынсене пурне те çаратса пĕтернĕ, вĕсен пĕтĕм продовольствине,

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тĕратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

41. Калинински районри Шĕнер ялсоветне кĕрекен **«Красноармеец» колхоз** (колхоз председателĕ **Н. Е. Ефимов** юлташ). Колхоз ир акмалли тĕштырă культурисене 7 ĕç кунĕнче пысăк пахалăхпа акса пĕтернĕ. Акара **М. Голубчиковпа П. Кошмаров** юлташсен бригадисем пуринчен лайăх ĕçленĕ, вĕсем 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Сухаçăсем—**Денисов, Прокопьева, Кузьмин, Чернов** юлташсем вăрçăри пек ĕçленĕ, вĕсем кулленхи нормăна 165 процент таран тултарса пынă. Сӳрелекен **Е. Иванова** юлташ нормăра кăтартнă 2,5 гектар вырăнне кунсеренех 4-шар гектар сӳреленĕ.

42. Калинински районри **Мичурин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **А. И. Иванов** юлташ). Ир акмалли тĕштырă культурисене колхоз 8 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çуракинче акмалли пĕтĕм вăрлăха колхоз йăлтах имçамсемпе чӳхесе тасатнă тата яровизациленĕ вăрлăхпа акса хăварнă. **Виссарионов** юлташăн бригади пуринчен лайăх ĕçленĕ. Вăл 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Сухаçă **А. Степанов** юлташ вăрçăри пек ĕçленĕ. Нормăра кăтартса панă 1,2 гектар вырăнне вăл кунсеренех 1,5 гектар сухаланă, сӳрелекен **С. Тимофеев** юлташ нормăра кăтартса панă 3 гектар вырăнне кунсеренех 4,5 гектар сӳреленĕ.

Профсоюзсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва ирттерес ĕçе хутшăнасси çинчен

ВЦСПС Президиумĕ йышăннă постановлени

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăха çĕнĕ çĕкленӳпе ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Металлурги, авиаци тата танк промышленноçĕнчи работниксем пуçарса янипе, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту сарăлса кайрĕ.

Çав социализмлă ăмăртура рабочисем, инженерсем, техниксем тата служащисем, государство планĕнчен иртерсе, Сталин юлташăн историллĕ приказне, 1942 çула нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкмалли тата совет çĕрĕсене гитлерла ирсĕрсенчен ирĕке кăлармалли çулталăк туса хума хушакан приказне пурнăçлама кирлĕ продукцие Хĕрлĕ Çар валли туса памашкăн хăйсем çине обязательствăсем илчĕç.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе промышленноçăн тĕрлĕ отраслĕсен Халăх Комиссариачĕсем рабочисен, инженерсен, техниксен тата служащисен пуçарăвне ырларĕç, промышленноçăн кашни отраслĕпе транспорт валли Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн условийĕсене туса çирĕплетсе пачĕç.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ профсоюзсен центрти тата облаçсенчи комитечĕсене, фабрикăсемпе заводсенчи тата цехсенчи комитетсене тата профгруппоргсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва ирттерес ĕçе активлăн хутшăнма чĕнет; ăмăртăва активлăн хутшăнни нимĕçсен фашистла ирсĕр бандисене çĕнтермешкĕн пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса тăрас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума кирлĕ.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ çапла йышăнать:

1. Фабрикăсемпе заводсенчи, цехсенчи комитетсене тата профгруппоргсене çапла тума хушас: вĕсен рабочисемпе работницăсене хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстерес ĕçре куллен пулăшса пымалла тата рабочисемпе работницăсем нормăсене пĕтĕмпех тата ирттерсе тултарса пырас тĕлĕшпе, продукци пахалăхне лайăхлатса пырас тĕлĕшпе хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçласа пынине куллен тĕрĕслесе тăмалла.

2. Фабрикăсемпе заводсенчи, цехсенчи комитетсен тата профгруппоргсен производствăллă заданисене мастерсем патне вăхăтра çитернине тĕрĕслемелле, унтан цехсен начальникĕсемпе тата мастерсемпе пĕрле çакăн пек мерăсем йышăнмалла: цехпа цех, пролетпа пролет, бригадăпа бригада тунă социализмлă ăмăрту договорĕсенче заданисене мĕн чухлĕ, мĕнле пахалăхпа тата мĕнле срокра пурнăçламалли çинчен калакан конкретнăй обязательствăсем пулччăр, вĕсем пĕрле предприятие государство планне пĕтĕмпех тата ирттерсе тултарма май паччăр.

3. Профгруппоргсен станоксемпе агрегатсем ĕççĕр ларнине хирĕç вăйлăн кĕрешмелле, рабочисемпе работницăсене ĕç нарядĕсем вăхăтра панипе паманнине асăрхаса тăмалла тата çакăн пек йĕрке тума тăрăшмалла: ĕçлеме тытăначчен рабочисемпе работницăсем хăйсен ĕç вырăнĕсене хăйсем хатĕрлесе хуччăр, хăйсене кирлĕ материалсемпе инструментсем пулччăр тесе, хăйсен станокĕсемпе агрегачĕсем юсавлă пулччăр тесе вĕсем хăйсем тăрăшчăр. Профгруппоргăн производствăра палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме мастер урлă çийĕнчех кирлĕ мерăсем йышăнмалла, унăн çакна асра тытса тăмалла: ĕç вăхăчĕпе туллин усă курни, станоксемпе агрегатсем пĕр чарăнмасăр ĕçлесе тăни фронт валли кирлĕ продукцисене ытларах туса кăларма кирлĕ татăклă условисем пулса тăрать.

4. Фабзавкомсене çапла тума сĕнес: вĕсен предприятире социализмлă ăмăрту мĕнле пыни çинчен хăйсен ларăвĕсенче эрнере пĕрре сӳтсе-явмалла тата рабочисене, работницăсене, бригадăсене, цехсене социализмлă обязательствăсене пурнăçлама мĕн кансĕрлет, çавсене пĕтерес тĕлĕшпе практикăллă мерăсем палăртса хумалла.

Профгруппоргсен хăйсен профгруппинче пыракан социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене кашни кунах шута илсе пымалла тата социализмлă обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе кая юлакан рабочисемпе работницăсене стахановецсемпе ударниксем пулăшас ĕçе организацилемелле.

5. Рабочисемпе инженерно-технически работниксен, рационализаторсемпе изобретательсен пуçарăвĕсене фабрикăсемпе заводсенчи, цехсенчи комитетсен тата профгруппоргсен мĕн вăй çитнĕ таран пулăшса пымалла тата ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне хăпартма пулăшакан пахарах приспособленисене, рационализаторла сĕнӳсене тата изобретенисене кĕске срокра производствăра пурнăçа кĕртме тăрăшмалла.

6. Фабрикăсемпе заводсенчи тата цехсенчи комитетсен çапла тума тăрăшмалла: ĕç нормисене пурнăçлайман рабочисемпе работницăсене хăйсен нормисене пĕтĕмпех тата ирттерсе тултаракан рабочисемпе работницăсем юлташла пулăшса пыччăр. Тата çакна тĕрĕслесе тăмалла: фабрикăсемпе заводсене çĕнĕрен кĕнĕ рабочисемпе работницăсене, квалификаци çуккисене, кирлĕ профессие вĕренме пĕр-икĕ уйăхлăха квалификациллĕ рабочисем çумне çирĕплетмелле.

7. Фабрикăсемпе заводсенчи комитетсен ФЗО шкулĕсемпе ремесленнăй училищĕсенчен вĕренсе тухнă хыççăн фабрикăсемпе заводсене ĕçлеме кĕнĕ рабочисене социализмлă ăмăртăва хутшăнтарма куллен тăрăшмалла.

Çав рабочисене вĕсен профессийĕсемпе квалификацийĕсене кура ĕç паччăр тесе тăрăшмалла тата ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшакан майсене вĕренсе çитес тĕлĕшпе пулăшса пымашкăн вĕсене кадровăй рабочисем шефа илессине организацилемелле.

8. Фабрикăсемпе заводсенчи тата цехсенчи комитетсен стахановецсемпе ударниксен чи лайăх çитĕнĕвĕсемпе ĕç майĕсене ыттисем хушшине сармалла; çак ĕçре фабрикăсемпе заводсенчи многотиражкăсемпе, стена хаçачĕсемпе, радиопа, клубсенчи выставкăсемпе тата ятарласа пичетлесе кăларнă плакатсемпе тата листовкăсемпе анлăн усă курмалла.

9. Фабрикăсемпе заводсене предприятисем çумĕнчи столовăйсемпе буфетсен ĕçне куллен, массăллăн контроль туса тăма хушас, вĕсенче кăтартуллă йĕрке, ĕç вăхăтне сая яма паман йĕрке туса хурас тесе çине тăрса кĕрешме хушас.

10. Профсоюзсен Центрти тата Облаçсенчи Комитечĕсене предприятисенче социализмлă ăмăрту организацилессе ăна ертсе пырас ĕçре, фабрикăсемпе заводсем хушшинче ăмăртăва сарса ярас ĕçре фабзавкомсене оперативно пулăшса пыма хушас; социализмлă ăмăртăва организацилес тĕлĕшпе чи лайăх ĕçлекен фабзавкомсен опытне пĕр фабрикăна заводран тепĕрне куçарма хушас; профорганизацисен пĕтĕм ĕçĕ предприятисем государство планĕсене тата Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене пĕтĕмпех тата ирттерсе пурнăçлас тĕлĕшпе пулса пымалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

выльăхĕсемпе шăйăк-хĕшĕкĕсене, тумтирĕсене, посудăсене тата килти хатĕрсене туртса илнĕ. Пирĕн войскăсем çапçине пула чакнă чухне нимĕç оккупанчĕсем колхозниксен 200 килне çунтарса янă, шкул çуртне, больницăна тата ытти обществăллă çуртсене аркатнă.

* * *

Финляндире тĕрлĕ киревсĕр ĕçсем тăвасси вăйланса пырать. Вăрланăшăн тĕрмене хупнисен хисепĕ, юстици министерстви чылаях пĕчĕкленсе кăтартнă тăрăх та, юлашки çул хушшинче 70 процент чухлĕ ÿснĕ. «Кансалис сосиалисти» хаçат майăн 16-мĕшĕнче çапла çырнă: «Киревсĕр ĕçсем тăвасси нихăçанхи пек мар ÿссе кайрĕ. Пур çĕрте те тата пурте мĕн май килнине вăрлаççĕ». «Або Ундер Ретельсер» хаçат çапла калать: «Киревсĕр ĕçсем тăвасси çĕршывра пĕрмаях ÿссе пырать. Кашни кун тенĕ пекех магазинсенче вăрланисем пулаççĕ. Продуктсем вăрласси кашни кунах пулса пырать. Вăрăсене нихăçан та тытма çук. Граждансем хушшинче шанчăксăрлăх сарăлма тытăнать». «Аян Суунта» хаçат «Финляндири тĕрмесем лăках тулса ларнă» тесе йышăнать. Финлянди пичечĕн çак сăмахĕсем Гитлер тарçисен — Рютин, Таннерăн, Маннергеймăн ирсĕр шайки Финляндие çавтери юхăнтарса янине тата вырçăлăха кĕртсе ÿкернине тепĕр хут кăтартса параççĕ.

Моряксем тупа туни

СЕВАСТОПОЛЬ, майăн 25-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Нимĕçсен батальонĕ высота çине наступлени тума тытăннă. Çав высота çинче пирĕн дзот пулнă. Дзотра черноморецсем — ултă матрос вырнаçса тăнă. Кунтан фашистсен çывăхри позицийĕсем питех те лайăх курăнса тăнă. Çакна пула матроссем гитлеровецсене пĕр канăç та паман. Çавăнпа та фашистсем пирĕн дзота тытса илесшĕнех пулнă. Фашистсен речĕсем тăвайки çинелле наступлени туса хăпарнине чи малтан дзот командирĕ комсомолец Раенко юлташ асăрханă.

— Ну, вĕри пулать,—тенĕ вăл, дзотăн хĕсĕк шăтăклă амбразури витĕр çывхаракан фашистсен речĕсене курса. Ултă моряк: Раенко, Доля, Четвертаков, Погорелов, Калюжный тата Еремко—пĕр утăм та каялла чакмастпăр,—тесе тупа тунă.

— Тăшмана çĕр метр таран çывăха ямалла,—тесе команда панă Раенко. Комсомолец Погорелов пулемет патне выртнă. Раенко пеме приказ панă вăхăтра нимĕçсем моряксем патнех çывхарса çитнĕ. Тĕл перекен пулеметчик пĕр тапхăр персе яни тăшманăн малти ретне сăптăрса тăкнă. Фашистсем çĕр çумне лăпчăннă. Вĕсем темиçе хутчен те атакăна çĕкленнĕ, анчах та пулеметран çунтарма тытăнсан, кашни хутрах каллех çĕр çумне выртнă.

Моряксем черетлĕн персе тăнă. Дзот командирĕ Раенко пуçран суранланнă, суранĕ çыхнă хыççăн вăл каллех çапăçу ĕçĕсене ертсе пыма пуçланă. Акă, тăшман персе янă мина дзот амбразурине лексе çурăлнă. Мина ванчăкĕпе командир Раенко иккĕмĕш хут, вилмеллех суранланнă. Вилес умĕн вăл пурне те пĕр чакмасăр çапăçма тата тупа тунă сăмаха виличченех тĕрĕс тытса тăма хушнă. Вилнĕ командир вырăнне Погорелов йышăннă.

Дзот пехотăна малалла кайма паманнине кура, нимĕçсем ун çине орудисенчен вăйлăн пеме пуçланă. Снарядсем дзот патнех ÿке-ÿке вăркăннă. Погореловпа Еремко суранланнă, анчах çапах та вĕсем хăйсенчен темиçе хут вăйлă тăшмана хирĕç çапăçма пăрахман. Каç пулса çитнĕ. Чĕррĕн юлнă ултă паттăр, хăйсем ывăнса çитнине пăхмасăрах, çапăçма пăрахман, вĕсем пулемет умне черетлĕн тăра-тăра пенĕ. Дзот таврашĕнчи усă вырăнсене тăшман пĕр таттисĕр персе тăнă, çак майпа вăл пирĕннисене дзотри моряксене пулăшма пыма паман. Тул çутăлнă. Таттисĕр çапăçура татах тепĕр кун иртсе кайнă. Тăшман пехоти дзота айăккисенчен çавăрса илме пуçланă. Противникăн пĕр ушкăнĕ дзот патнех шăвăнса çитнĕ. Çакна кура Четвертаковпа Калюжный дзотран сиксе тухнă та фашистсем çине гранатăсем вăркăнтарнă.

Кăнтăрла тĕлĕнче дзотри паттăрсем патне Потапенкăпа Король моряксем, политрук заместителĕ Глазырин тата Корж юлташсем шăвăнса çитнĕ. Вĕсем хăйсемпе пĕрле ручной пулемет илсе пынă. Халĕ ĕнтĕ çиччĕ хăюллă паттăр тăшмана икĕ пулеметран сăптăрма тытăннă. Совет воинĕсем парăнмасăр тăрса хыттăн кĕрешнине кура, нимĕç войскисен командованийĕ дзота аркатма пĕр ушкăн бомбардировщик кăларса янă. Дзот патнех 10 бомбăна ыхăн ÿксе çурăлнă, моряксем çапах та хăйсен крепоçне пăрахса тарма шутламан. Снаряд лекнипе станковăй пулемет стройран тухнă. Паттăр боецсенчен тăваттăшĕ çеç чĕррĕн юлнă. Патрон запасĕ те пĕтсе çитнĕ. Çывхарса килекен фашистсене моряксем гранатăсемпе пере-пере сирсе янă. Хаяр çапăçура пумай нимĕçсем пĕтнĕ, анчах дзотри моряксенчен те — Потапенко, Корж тата Король юлташсем паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ.

Пĕр Федор Глазырин кăна чĕррĕн юлнă. Вăл пулеметне илнĕ те хăйĕн чаçне таврăннă. Ире хирĕç пулăшу çитнĕ. Тăшмана хĕссе каялла чакарнă. Высота каллех пирĕн алла кĕрсе, противникăн çулне пÿлсе тăнă.

Пирĕн боецсем дзотра паттăррăн пĕтнĕ тăхăр геройăн виллине тупнă. Пулеметчик Калюжныйăн противогазĕ ăшĕнче хут татăкĕ тупнă. Вăл хут çине комсомолец хăйĕн вăйсăрланнă аллипе çапла çырса хăварнă: «Манăн çĕршыв! Вырăс çĕрĕ! Юратнă Сталин юлташ! Эпĕ ленинла комсомол ывăлĕ, вăл вĕрентсе ÿстернĕ çын, хама чĕрем мĕнле хушрĕ—çавăн пек çапăçрăм, кăкăрăмра чĕре тапнă чух çĕлен-калтасене пĕтертĕм. Эпĕ вилетĕп, анчах та хамăр çĕнтерессе ĕненетĕп. Тăшман Севастопольре пулаймĕ! Черноморецморяксем! Фашистла урнă йытăсене пĕтерĕр! Воин тупа тунине эпĕ пурнăçа кĕртрĕм. Калюжный».

Хальхи вăхăтра çак паттăрсен ячĕсем тăван çĕршывăн Севастополе хÿтĕлесе тăракан тĕрĕс ывăлĕсен чĕлхи-çăварĕсенчен каймаççĕ. Вĕсем хăйсен тинĕс çинчи крепоçĕшĕн черноморецсен пĕчĕк ушкăнĕ кĕрешнĕ пекех, тăшмана хирĕç паттăррăн та çирĕппĕн тăрса çапăçма тупа тăваççĕ.

М. ТУРОВСКИЙ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти членĕсен пухăвĕсем çинчен

Парти членĕсен пухăвĕ — коммунистсене воспитани паракан шкул, парти организацийĕн аслă органĕ. Пуху йышăннă решени кашни коммунистăнах обязательно пулса тăрать. Çакă вăл парти пухăвне кирек хăçан та лайăх хатĕрленсе ирттерме хушать. Кунтан ĕнтĕ пухăвăн кун йĕркине тĕплĕн шухăшласа тума кирли, пуху пулассине çинчен тата унта мĕнле ыйтусем сÿтсе-явмалли çинчен коммунистсене вăхăтра пĕлтерме кирли тухса тăрать.

Анчах парти членĕсен пухăвĕсене ирттересси çине пирĕн час-часах çиелтен пăхаççĕ. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи уполнаркомзагри пуçламĕш парторганизацире пухăва пымалли çинчен пуху пулнă кун кăна пĕлтереççĕ, докладчиксене пуху пуçланичченах тин уйăраççĕ. Çавна пула пухусен ĕçне коммунистсем активлăн хутшăнаймаççĕ.

Тăрмăшри пуçламĕш парторганизацире тата кĕçĕн Таяпари кандидатсен группинче протоколсене çуррине вырăсла, çуррине чăвашла пăтраштарса çыраççĕ. Хăшпĕр чухне ăсти парторганизацин протоколĕ иккĕнне те пĕлме çук. «Осоавиахим» колхозри парторганизацире пухура тухса каланисене протоколсене çырмаççĕ. 8-мĕш номерлĕ протоколра «прение 8 çын тухса каларĕç вăл шутра: 3 коммунист, 5 беспартийнăй пулчĕ», тенĕ. Пухусен протоколĕсенчен тата çакă курăнать: пуху решенийĕсенче практикăра пĕр-пĕр ĕçе тума коммуниста хушни çинчен çырнисем, конкретлăх сĕнÿсем сахал. Таяпа Ентринчи кандидатсен группин çуракине тухаччен пулнă пухăвĕн протоколĕнче çапла çырнă: «Çуракине хатĕрленсе пынă май ялхуçалăх машинисене вĕçех ремонтласа пĕтерес тата вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа пĕтерес. Акма юрăхсăр вăрлăхсене çак кĕске вăхăтрах улăштарса хатĕрлесе хурас», тенĕ. Решенине тăрăшшĕпех çавăн пек çырса тухнă, унта камăн мĕнле ĕç тумаллине кăтартса пани пачах çук. Протоколсене уйрăмах МТС-ри пуçламĕш парторганизацире тирпейсĕр çыраççĕ. 11-мĕш номерлĕ протоколран çакă курăнать: пухăвăн кун йĕркинче виçĕ ыйту тăнă — рабочи комитечĕн отчечĕ, комсомол организацин отчечĕ, Государствăн Военнăй Заемĕ çинчен. Анчах протоколра пĕр ыйту тăрăх та решени çук.

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕсемпе райком инструкторĕсен парти пухăвĕсене хатĕрлесе ирттересси çине, протоколсене йĕркеллĕ çырасси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла.

М. ЛАСТОЧКИНА.
ВКП(б) Елчĕк райкомĕн организаторски-инструкторски отделĕн заведующийĕ.

КОМСОМОЛА КĔРЕÇÇĔ

КАЛИНИНО. Комсомолăн Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацийĕн секретарĕ В. Степанова юлташ ялти çамрăксене комсомол ретне явăçтарас тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлет. Çамрăксене пухса вăл ВЛКСМ уставĕпе программи çинчен, комсомолецсен хальхи вăхăтри задачисем çинчен ăнлантарса парать. Çавна май комсомол ретне юлашки вăхăтра çамрăксенчен темиçе çын кĕчĕ. Вĕсенчен И. Якимов, Л. Власов, В. Алексеев, А. Гладков юлташсем колхозри ĕçе активлăн хутшăнаççĕ, çуракинче ыттисене пример кăтартаççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмла ăмăрту

Комплекснăй бригадăра

КАНАШ. (Хамăр корр.). Депо коллективĕ çак кунсенче Ленински чугунçулăн Мускав узелĕнче ĕçлекенсен чĕнĕвне сÿтсе явнă.

— Вĕсен чĕнĕвĕ, — терĕ кĕске митингра депори комплекснăй бригадăн бригадирĕ Черкасов юлташ, — чугунçул транспортĕнче ĕçлекенсен пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвăн пуçламĕшĕ. Çак ăмăртăва эпир те хутшăнар, çĕршывпа фронта паровозсемпе ытти машинăсем ытларах та лайăхрах юсаса парар.

Комплекснăй бригада железнодорожниксен пĕтĕм Союзри ăмăртăвне хутшăнса хăйĕн çине обязательствăсем илчĕ:

Паровозсем юсамалли задание кашни уйăхрах 20 процент ирттерсе тултармалла;

ĕç пахалăхне лайăхлатмалла, ĕç хатĕрĕсене типтерлĕ тытмалла;

двухсотниксен йышне ÿстермелле, работниксене тепрер профессие вĕрентмелле.

Бригада членĕсем те хăйсем çине уйрăм обязательствăсем илчĕç. Стахановец Чеботарев, ку таранччен нормăна 200 процента яхăн тултарнăскер, малашне 200 процентран кая мар тултарма пулчĕ.

Кулленхи ĕç нормине май уйăхĕн иккĕмĕш декадинче токарь Толмазов 244 процент, электросварщик Жигунов 241 процент, тимĕрçĕ Федоров 200 процент, токарь Тарасов, котельщик Григорьев тата слесарь Золотухин юлташсем вăтамран 150-шар процент тултарнă. Вĕсем, железнодорожниксен ăмăртăвне хутшăнса, ĕç тухăçлăхне татах ÿстерме, ĕç пахалăхне лайăхлатма сăмах пачĕç.

Çак кунсенче комплекснăй бригада хисеплĕ задани илчĕ. Ĕç пысăк, вăхăт сахалтан та эрне кирлĕ. Ăмăртăва хутшăннă слесарьсемпе токарьсем паровоза 5 кунра юсама сăмах пачĕç. Халĕ çав сăмаха пурнăçласиншĕн хĕрÿ ĕç пырать.

Т. ИВАНОВ.

ТЫЛРИ БОЕЦСЕМ

ВĂРМАР. Спорт инвентарĕсем тăвакан фабрикăра отечественнăй аслă вăрçă фронтне кайнă арçынсем вырăнĕнче вуншар хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Столярно-сборочнăй цехра ĕçлекен Е. Семенова, А. Тимофеева юлташсем нормăна кашни кунах 120 процентран кая мар тултараççĕ. С. Терентьева юлташ Архипов фронта кайсан ун вырăнне ĕçлеме тăнă. Матвеев рабочи фронта кайсан ун вырăнне унăн арăмĕ Матвеева юлташ тăнă. Халĕ вĕсем иккĕшĕ те столяр ĕçне ăнăçлăн туса пыраççĕ, нормăна тăтăшах 150—200 процент тултараççĕ.

Çак кунсенче фабрика çĕнĕ продукцисем туса кăларма задани илнĕ. Çав кунах ăна пурнăçлама А. Федорова, А. Павлова, Р. Павлова юлташсене хушнă. Вĕсем вăя шеллемесĕр, канма пĕлмесĕр ĕçлесе, çĕнĕ заказа срокченех пурнăçларĕç.

Фабрикăра ик-виçшер професспе ĕçлекенсен йышĕ ÿссех пырать. А. Федорова юлташ столяр, шлифовщица, сборщица ĕçĕсене, Матвеева юлташ столяр, шлифовщица, Архипова полировщица, столяр ĕçĕсене тăваççĕ. Иванова, Степанова столярсем кочегар ĕçне вĕренчĕç. Вĕсем пурте нормăна 115—130 процент тултараççĕ.

П. СЕРГЕЕВ.

Изюм—Барвенково енчи хаяр çапăçусем

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, майăн 25-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Фронтăн çак участокĕнче пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç оборонăллă хаяр çапăçусем туса пычĕç. Çапăçусем вăхăтĕнче фашистла войскăсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Нимĕçсен командованийĕ хăйĕн юратнă меслечĕпе, ăнсăртран тапăнас меслетпе тепĕр хут усă курчĕ. Гитлеровецсем çапăçăва танксене, артиллерие тата авиацие нумайăн кĕртсе ячĕç.

Артиллерирен персе тăнă хыççăн тата пирĕн оборона çине бомбардировщиксем массăллăн килсе тапăннă хыççăн нимĕçсем пире хирĕç 150 танк ытла кăларса ячĕç. Броньăллă хура машинăсем хыççăн тăшманăн автоматчикĕсем, минометчикĕсем тата пехота чаçĕсем пычĕç.

Çапăçусенче пиçĕхнĕ, лайăх вĕренсе çитнĕ тата лайăх хĕçпăшалланнă совет войскисем тăшмана кĕтсе илме тивĕçлипе хатĕрленсе çитрĕç. Старши лейтенантăн Михайловăн тата старши лейтенантăн Романенкăн стрелок-пулеметчикĕсемпе минометчикĕсем уйрăмах палăрчĕç. Нимĕçсен атакисене пĕрин хыççăн тепĕрне сире-сире ярса, вĕсем 1000 ытла гитлеровеца вĕлерсе пĕтерчĕç. Çĕршер красноармеецсем, командирсемпе политработниксем çак çапăçусенче хăйсене палăртрĕç. Старши лейтенант Зенин танк туппинчен тÿррех тĕллесе персе фашистсен пехотин пĕтĕм ретне пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн танкистсем пултаруллăн кĕрешеççĕ. Беляев лейтенантăн экипажĕ тĕл персе фашистсен 3 танкне, пехота ларса пыракан 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Николаев лейтенантăн экипажĕ 4 дзота аркатнă, танка хирĕç пемелли пĕр орудие тата гитлеровецсем ларса пыракан 28 машинăна пĕтерсе тăкнă.

Танка хирĕç пемелли пăшалсен расчечĕсем маттуррăн çапăçаççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ çак кунсенче нимĕçсен икшер-виçшер танкне пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн красноармеецĕсем, гранатăсемпе тата горючи тултарнă бутылкăсемпе усă курса, фашистсен вуншар машинисене çунтарса тата сирпĕнтерсе янă.

Пирĕн çĕр çинчи войскăсене совет летчикĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Пĕрмаях вĕçсе пырса штурмласа тата бомбăсем пăрахса, сталинла соколсем противника пысăк çухатусем тÿстерчĕç. Изюм—Барвенково енче нимĕçсем наступлени тунă вăхăт хушшинче кăнтăр фронтĕнчи летчиксем нимĕçсен вуншар самолечĕсене персе антарнă е çĕр çинче пĕтерсе тăкнă, нумай танксене çунтарса янă тата çĕмĕрнĕ.

Совет Союзĕн кăнтăрти çĕрĕсене хÿтĕлекенсен паттăрлăхне, çирĕплĕхне, çапăçури мастерлăхне пула, нимĕçсен наступленийĕ арканса пырать.

А. МАЛИБАШЕВ.

Çураки ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлер

Майăн 25-мĕш тĕлне Советски район çĕрулми лартас плана 51 процент, техникăллă культурăсем акас плана 64 процент пурнăçларĕ. Паянхи куна çĕрулми лартас плана районри 30 колхоз пурнăçланă. Колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи çуракинче пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ, çураки ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн тăрăшаççĕ.

«Прогресс» колхозăн кăçал план тăрăх çĕрулмие 60 гектар лартмалла пулнă пулсан, вăл ăна пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕ. Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз та çĕрулмие 30 гектар çине, Николаевăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз 24 гектар çине, «Çĕнĕ пурнăç» колхоз 27 гектар çине лартрĕç.

Çавăн пекех техникăллă культурăсем акас ĕç те чылай колхозсенче ăнăçлăн пулса пырать. «Майăн 1-мĕш», «Хĕрлĕ партизан», «Радио», «Хĕрлĕ Октябрь» колхозсем техникăллă культурăсене пысăк пахалăхпа акса хăварчĕç. Техникăллă культурăсем акас плана майăн 25-мĕш тĕлне пурĕ 20 колхоз пурнăçланă. «Крестьянская газета» колхоз кантăр 16 гектар çине акрĕ, «Степан Разин» колхоз 20 гектар çине акрĕ. Çавăн пекех кантăр акас ĕçе «Красный пахарь», «Хĕрлĕ Октябрь», Сталин ячĕпе тăракан тата М. Горький ячĕпе тăракан колхозсем те пысăк пахалăхпа пурнăçланă.

Çакăнпа пĕрлех районри ăшпĕр колхозсенче çураки ĕçĕсем вăраха чăсăлса пыраççĕ. Вăрманкас Асламасри «Трудись» тата Лапракасси ялсоветĕнчи «Культура» колхозсем çĕрулми лартма халĕ те пуçăнман-ха.

Çавăн пекех «Самолет» колхозра та вăрлăх çук тесе, кантăра акмасăр тăраççĕ. Çак çитменлĕхсем пĕтĕмпех хăшпĕр колхозсенчи руководительсем хăйсем кахалланса ларнă пирки пулаççĕ. Кантăр вăрри районра çителĕклĕ, анчах ăна юнашарти колхозсенчен илес пулать. Çавăн пекех çĕрулми вăрлăхĕ те плана пурнăçлама çителĕклĕ.

Çураки ĕçĕсене халех туса çитермелле. Техникăллă культурăсене, çĕрулмипе пахча-çимĕçсене çак кунсенчех лартса çитерессишĕн тăрăшмалла.

П. НИКИТИН.
ВКП(б) Советски райкомĕн секретарĕ.

ХĂМЛА ЛАРТМА ХАТĔРЛЕНЕТПĔР

СЕНТЕРВАРРИ. Юртакассинчи «Искра» колхозра хăмла лартса тăвас тĕлĕшпе уйрăм звено ĕçлет. Ку звенона Е. Степанова юлташ ертсе пырать. Колхоз иртнĕ çул вăтам шутпа гектартан 5,4 центнер хăмла туса илнĕ. Кăçал хăмла тухăçлăхне татах ÿстерме тăрăшаççĕ. Халĕ хăмла вырăнне çемсетеççĕ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

ТАВАЙ. Тăрмăшри тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем оборона промышленноçĕ валли тимĕр-тăмăр пĕрмаях пухаççĕ. Çак кунсенче вĕсем 2,5 центнер пухса пачĕç.

Г. КАЧИМОВ.

Гитлеровецсем латышсене, литовецсене тата эстонецсене Германие каторгăлла ĕçе хăваласа каяççĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 25-мĕш. (ТАСС). Гитлерла влаçсем Литва, Латви, Эстони Советлă республикисенчен Германие ирĕксĕрлесе рабочисем илсе каяссине халĕ те туса пыраççĕ. «Дейче цейтунг ин Остланд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çак юлашки вăхăтра пĕр Вильнюс облаçĕнчен çеç 4.800 çынна ирĕксĕр илсе кайнă. Ирĕксĕр илсе каякан совет çыннисем хăйсене Германие илсе кайнине каторгăна яни çине пăхнă пек пăхнине гитлерла хаçатсем те пытармаççĕ. «Дейче цейтунг ин Остланд» хаçат каланă тăрăх, «Латыш студенчĕсене Берлин урамĕсене шăлтараççĕ. Любек, Киль, Гамбург хулисене янă латыш хĕрупраçĕсене предприятисене мар, аскăнлăх çурчĕсене янă. Çакăншăн латышсем тарăхаççĕ».

Гитлерла «вербовщиксем» мĕнле хăтланни çинчен «Ревалер цейтунг» хаçат аван каласа парать. «Медицина комиссийĕ витĕр кăларнă хыççăн, — тесе çырать хаçат, — эстонецсене сборнăй пункта пыма полици урлă приказсем ярса панă. Кашниех вăхăтра пырса çитмелле, вăхăтра пымасан, ăна полици ирĕксĕр тытса ярать. Кам приказа пурнăçламасть, ăна асаплантараççĕ». Çапла майпа пухнă рабочисене çар командисем хуралласа пырса Германие илсе çитереççĕ. Хаçатсем хăш чухне Латви, Литва, Эстони рабочийĕсем Германирен тăванĕсем патне янă çырусене пичетлеççĕ. Çав çырусем хаяр цензура витĕр тухнă пулин те, вĕсене гестапо юсанă пулин те, вĕсенчен Германири ютçĕршыв рабочийĕсем валли каторгăри пек йĕрке туса хуни курăнать. «Дейче цейтунг ин Остланд» хаçатра пичетленĕ пĕр çырура çапла каланă: «Ĕç вăхăчĕ яра кунĕпех пырать, рабочисем пурăнакан лагерьсенче туса хунă режима кăшт та пулин пăснăшăн рабочисене арестлеççĕ е продовольстви паекне памаççĕ».

Германи халăхĕнчен кивĕ тумтирсене пуçтарса илеççĕ

ЖЕНЕВА, майăн 26-мĕш. (ТАСС). Германи хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Германин пир-авăр промышленноçĕ чĕртавар запасĕ пĕтсе çитнĕ пирки йывăр кризиса кĕрсе ÿкнĕ. «Бергверкс цейтунг» хаçат çырнă тăрăх, пир-авăр тĕртсе кăларакан хăшпĕр предприятисем хупăнса ларнă, ыттисем эрни-эрнипе ĕçсĕр лараççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа Германири пасарсене сутлăх пир-авăр пĕр метр та тухман. Пир-авăр таварĕсем пурте çар валли каяççĕ. Çапах та çарта çуллахи тумтир тата кĕпе-йĕм нумай çитмест.

Çар предприятийĕсенче нимĕç рабочийĕсем кĕпе тăхăнмасăрах ĕçлеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен кĕпесем çук. Çав тĕлĕшпе нумай предприятисенче пăлханусем пула-пула иртнĕ.

Германи информаци бюровĕ официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 15-мĕшне çитиччен пĕтĕм Германипе кивĕ тумтирпе трикотаж пуçтарас кампани пулса иртмелле. Хуçалăх министрĕ Функ нимĕç халăхне чĕнсе сăмах каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче: Германи «йывăр условисенче пурăнать», тесе йышăннă. «Çар предприятийĕсемпе ялхуçалăхĕнче ĕçлекен арçынсемпе хĕрарăмсен тумтир çитмест»,—тенĕ Функ. Вăл служащисемпе килхуçи хĕрарăмĕсене «кивелсе кайнă пирки выртса çÿрекен тумтирсене, трикотажран çĕленĕ кивĕ япаласене, чăлхасене, кивĕ кĕпе-йĕме, çĕтĕк-çатăкана пама чĕннĕ. Функ сăмахĕсем тăрăх, çав япаласем вĕсем Германин «чĕртавар резервĕсем» пулса тăраççĕ. «Çар хуçалăхĕн хăвачĕ тата вăл ĕçлеме пултарни çав резервсенчен килет», тенĕ Функ.

Журналистсем хушшинче çапла калаççĕ: халăх аллинчи кивĕ тумтирсемпе çĕтĕк-çатăксене вăйпа туртса илĕç, теççĕ.

Германире пăхăр питĕ нумай çитмест

СТАМБУЛ, майăн 25-мĕш. (ТАСС). Пăхăр питех те çителĕксĕр пирки Германия оккупациленĕ тата вассал пулса тăракан çĕршывсенчен çав металăн запасĕсене пĕтĕмпех сăптăрса илет. Нимĕçсем хушнă тăрăх, Хорватири пуканелле влаçсем частнăй çынсен пăхăртан, бронзăран тата йĕсрен тунă япалисене пурне те, кухньăри савăт-сапапа хитрешĕн тунă япаласем таранах, çырса тухса шута илесси çинчен пĕлтернĕ. Чиркÿсен чанĕсене те çырса тухса шута илмелле. Шута илнĕ япаласене сутма та, улăштарма та чараççĕ.

Нимĕçсем Румыни хуçалăхне хăйсене пăхăнтарнă

СТАМБУЛ, майăн 25-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен Загреба хулинче тухакан «Нейе орднунг» хаçачĕ нимĕçсем Румыни хуçалăхне пĕтĕмпех хăйсене пăхăнтарни çинчен пĕр вăтанмасăр уççăнах çырать.

Румыни промышленноçĕн шултра предприятийĕсене нимĕçсен промышленникĕсемпе банкирĕсем контрольлесе тăраççĕ. Çапла, Маллакс предприятийĕсем Германи обществин аллине куçнă. Çав обществăн капиталĕн çурри «Герман Геринг» концернăн пурлăхĕ пулса тăрать. Капша Мика предприятийĕсенче те Германи акционерĕсем хуçа пулса тăраççĕ. Германи Румынири нефте ытти çĕршывсене сутма чарнă, нефте пĕтĕмпех хăйне илет, Румыни валли пăртак çеç хăварать. Журнал Румынин нефть промышленноçĕ юлашки çулсем хушшинче çителĕксĕр аталанса пынине кăтартса парать.

Берлинри «Дейче банк» Румынин коммерчески банкĕн операцийĕсене анлăн хутшăнать. Германири кредит обществи Румынин тепĕр банкĕн операцийĕсене хутшăнать. Журнал палăртнă тăрăх, «Германи капиталне Румыни хуçалăхне вырăнаçтарас процесс çакăнпах чарăнмасть-ха».

Югослави партизанĕсен кĕрешĕвĕ

СТАМБУЛ, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Каирта тухса тăракан «Югославенски гласник» хаçат çапла пĕлтерет: Югослави партизанĕсен ĕçне пула Белградпа Загреб хушшинче çыхăну тытма май çук, тет. Пĕр югослав, Загреб хулинчен Белграда нумай пулмасть пынăскер, партизансем вĕсен поезчĕ çине виçĕ хут тапăнни çинчен каласа панă. Çул çине чулсем купаласа тултарнине пула поезд темиçе хутчен те чарăннă. Поездсене сыхлакансем кашни каймассеренех пысăк çухатусем туса таврăнаççĕ.

Хаçат малалла: Итали салтакĕсем час-часах партизансене курсанах хĕçпăшалĕсене пăрахса тарма тытăнаççĕ, тесе пĕлтерет. Çавна пула партизансен аллине хĕçпăшалсемпе ытти çар материалĕсем нумай лекнĕ. Нумай пулмасть Италин Микхичери гарнизонĕ пĕр хĕçпăшалсăрах тăрса юлнă.

Карловацра полици тумĕпе тумланнă партизансен групни вырăнти тĕрмене хупнă партизансене ирĕке кăларнă тата аманнă юлташĕсене илсе кайнă.

Финляндире преступленисем туни хăрушлăн ÿссе пырать

СТОКГОЛЬМ, майăн 26-мĕш. (ТАСС). Преступленисем туни Финляндире хăрушлăн ÿссе пыни çинчен финсен пичечĕ хăраса çырать. Хаçатсем ирĕксĕрех преступленисенчен ытларахăшне выçлăхпа нушалăха пула тунă, тесе йышăнаççĕ. «Магазинсенче кашни кун тенĕ пекех вăрлаççĕ,—тесе çырать «Або Ундер Ретельсер» хаçат,—апат-çимĕçсене вăрласси ялан ĕç пулса тăчĕ ĕнтĕ», тет. «Кансалис сосиалисти» хаçат кăтартса панă тăрăх, «преступленисем тăвасси Финляндире халиччен пулман пек вăйлăн ÿссе кайнă. Вăрласси пур çĕрте те сарăлнă». «Карьяла» тата «Суомен сосиалидемокраатти» хаçатсем çапла çыраççĕ: отпуска таврăннă фин салтакĕсем вăрă ĕçĕпе час-часах аппаланаççĕ, вĕсем апат-çимĕçсем, супăнь, табак вăрлаççĕ, тесе çыраççĕ.

Финляндин финанс министрне Пеккала вырăнтан кăларнă

СТОКГОЛЬМ, майăн 24-мĕш. (ТАСС). Хельсинкире финанс министрне Пеккала «вăл хăй ыйтнипе» отставкăна кăларни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Финанс министрĕ пулма Таннера лартнă.

Журналистсен ушкăнĕсенче кăтартнă тăрăх, Пеккала вырăнтан кăларнин сăлтавĕ—Финляндире финанс йывăрлăхĕсем питех те çивĕчленсе çитни пулать.

Швеци журналĕ «Ню» çапла çырать: вăрçă пула Финляндире укçа-тенкĕ тĕлĕшпе государство парăмĕсем питĕ ÿссе кайнă. Халĕ çав парăм 50 миллиард маркăна çитнĕ, вăл 1940 çулти парăмран 10 хут ытларах пулать. Нумай пулмасть, Финлянди правительстви чылай налогсене татах ÿстернĕ. Анчах та «Суомен сосиалидемокраатти» хаçат çакна асăрхаттарса çырать: «налогсем малалла татах та ытларах ÿсĕç, халăхăн çакăнпа килĕшмелле пулать», тет.

Совет артисчĕсен Тегеранри ăнăçлă выступленийĕ

ТЕГЕРАН, майăн 26-мĕш. (ТАСС). Тегерана Сталинла преми лауреачĕ Халима Насырова ертсе пыракан Узбек ССР артисчĕсен группи пырса çитнĕ. Узбек артисчĕсен концертĕнче премьер Сохейли, меджлис председателĕ Эсфендиари, министрсем, обществăллă деятельсем, дипломатиллĕ корпус тата пичет представителĕсем пулнă. Концерт питĕ ăнăçлăн иртнĕ.

ХРОНИКА

РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ А. А. Пекшев юлташа РСФСР Государство Контролĕн Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарскому тресту столовых требуется на постоянную работу ГЛАВНЫЙ БУХГАЛТЕР.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Ленина, дом № 11.
Телефон № 4—01 и 0—61.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 502. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п. л.